26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ОКТЯБРЬ
30
ШАМАТКУН
216(6453) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет Союзĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем И. В. Сталин юлташа янă çыру

Хаклă Сталин юлташ!

Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕ 25 çул тултарас умĕн эпир, Совет Союзĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем — фронтовиксем, партизансем, тылри работниксем — Сире, пирĕн тусăмăрпа учителе, пĕтĕм чĕререн юратса, сирĕн çинчен шухăшлатпăр, Сире хĕрӳллĕ салам яратпăр, тăван халăхăн чапĕшĕн, унăн тăшманĕсене хăратса тăмашкăн Сире сывлăх сунатпăр.

Совет çамрăкĕсен уявĕ Хĕрлĕ Çар чаплă çĕнтерӳсем тунă кунсемпе пĕр вăхăтра пулнăшăн эпир телейлĕ. Пирĕн халăх çак çĕнтерӳсене тарпа юн юхтарса çĕнтерсе илчĕ, ĕçлесе тупрĕ, асап витĕр турĕ. Çак ăнăçусенче пирĕн ĕç те пĕр пĕчĕк вырăн йышăнса тăнăшăн эпир хавасланатпăр.

Советсен çамрăк республикишĕн пынă çапăçусенче çамрăксен коммунистла союзĕ çуралчĕ. Владимир Ильич Ленин тата Эсир, унăн шанчăклă юлташĕпе тусĕ, комсомол çуралнă çĕрте пултăр. Большевиксен партийĕ ертсе пыни, унăн лозунгĕсем кирек хăçан та пирĕн кĕрешĕвĕн, ĕçĕн, вĕренĕвĕн никĕсĕнче тăнă, малашне те унăн никĕсĕнче тăрĕç.

Парти пире совет халăхĕшĕн хамăр пурнăçа шеллемесĕр ĕçлесе тăма, хамăр тăван çĕршывшăн хастарлăн та нимрен хăрамасăр кĕрешме, мухтанман çынсем пулма, хамăр ĕçе тивĕçлипе хаклама, тунă çитĕнӳсемпе лăпланса ларасăр, яланах малалла туртăнса пыма вĕрентет.

Пирĕн тăван çĕршыв совет влаçĕ вăхăтĕнче вăрăм та телейлĕ çул утса тухрĕ. Эпир, çамрăк фронтовиксем, рабочисем, хресченсем, интеллигентсем, совет йĕрки пире мĕн тери нумай панине, малашнехи пурнăç патне кайма пире мĕн тери аслă çул уçса панине курса тăратпăр.

Тăван çĕршыв, совет влаçĕ — вăл эпĕ, манăн пурнăç, манăн кунçул, манăн телей, манăн пуласлăх, — çапла калать Совет Союзĕн кашни çамрăк гражданинĕ.

Вунпилĕк çул каялла, граждан вăрçи вăхăтĕнче уйрăмах паллă ĕçсем тунăшăн правительство аллинчен Хĕрлĕ ялав орденĕ илнĕ чухне, комсомолецсем çапла тупа турĕç: «Пирĕн пĕлӳ, пирĕн мускулсем, пирĕн пурнăç рабочисемпе хресченсен влаçĕ аллинче. Граждан вăрçин вутçулăмлă тапхăрĕнче эпир вĕсене шеллесе тăмарăмăр, çĕнĕ йывăрлăхсемпе çĕнтерӳсен кунĕсенче те эпир вĕсене, пĕр шеллесе тăмасăр, хамăр влаçăн аллине паратпăр. Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флотăн хĕрлĕ ялавĕсене çĕнĕрен чапа кăларма тупа тăватпăр».

Çав тупа тунине пурнăçа кĕртсе пырса, Совет Союзĕнчи çамрăксем фронтра та, тылра та хамăр тăван çĕршывăн телейĕшĕн хăйсен пурнăçне шеллемесĕр кĕрешеççĕ.

Темиçе çĕр пин комсомолец хăйсен ирĕкĕпе фронта кайрĕç. Комсомолецсем чи шанчăклă, чи хăюллă, чи дисциплинăллă боецсем кирлĕ вырăнсене — гвардейски минометнăй чаçсене, торпеда катерĕсем çине, сывлăшран антаракан десант çарĕсене кайрĕç. Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне хăйсен ирĕкĕпе темиçе вунă пин хĕр кайрĕ. Вĕсем зенитчицăсем, пулеметчицăсем, снайперсем, телефонисткăсем, радисткăсем, сандружинницăсем, медицина сестрисем пулса тăчĕç.

Пур йышши çарсенче те çапăçу вут-çулăмĕнче çар ĕçĕн çамрăк мастерĕсем çуралса ӳсеççĕ.

Отечественнăй вăрçăн малтанхи кунĕсенчех, акă, комсомол вĕрентсе çитĕнтернĕ Николай Гастелло, Петр Харитонов, Михаил Жуков, Степан Здоровцев çав тери паттăр ĕçсем турĕç, пуринчен малтан Совет Союз Геройĕн ятне илчĕç.

Пушкăрт республикинчи комсомол воспитанникĕн Александр Матросов рядовойăн ячĕ ĕмĕрлĕхе чапа тухрĕ. Зоя Космодемьянская, Лиза Чайкина, Шура Чекалин ячĕсем, Краснодон хулинче вăрттăн ĕçленĕ «Çамрăк гвардин» çамрăк геройĕсен ячĕсем юмахри пек чапа тухрĕç.

Отечественнăй вăрçăн летопиçне комсомол шеф пулса тăракан çар морякĕсем нумай чаплă ĕçсем çырса хучĕç. Комсомол çирĕм çул ĕнтĕ тинĕс-çар флочĕн шефĕ пулса тăрать. Çар карапĕсем çине комсомол путевкипе пынă çамрăксем нумайĕшĕ хăйсен ĕçне лайăх пĕлекен офицерсем пулса тăчĕç. Вырăс флочĕн морякĕсен паттăр йăлисене тытса пырса, флотри çамрăксем тинĕс çинче те, çĕр çинче те хастарлăх тĕлĕшĕнчен Хĕрлĕ Çарăн çамрăк боецĕсемпе ăмăртаççĕ. Совет морякĕн хура халачĕпе йăрăмлă кĕпинчен нимĕç вутран хăрани пек хăрать.

Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флотăн Совет Союз Геройĕн аслă ятне илме тивĕçлĕ пулнă воинĕсем хушшинче 500 çын ытла Ленинпа Сталин комсомолĕн воспитанникĕсем пулса тăраççĕ. Çак çулăн 6 уйăхĕ хушшинче кăна çĕр пин ытла комсомолеца-фронтовика Совет Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăланă.

Эсир фронт валли резервсем хатĕрлеме кăтартса панине пурнăçа кĕртсе пырса, комсомол всевобучпа пĕрле темиçе çĕр пин стрелок, танк истребителĕсем, гранатометчиксем, пулеметчиксем, подрывниксем, минометчиксем вĕрентсе хатĕрлерĕ, вĕсем халĕ Отечественнăй вăрçăн фрончĕсенче çапăçаççĕ.

Тăшман тылĕнче тăрса юлнă çамрăксем те нимĕç захватчикĕсемпе пĕр чарăнмасăр кĕрешеççĕ. Комсомолецсемпе çамрăксем партизансен нумай отрячĕсенче вĕсен чи хастарлă пайĕ пулса тăраççĕ. Комсомолăн темиçе çĕр активисчĕ — вăрттăн ĕçлекен организацисен, райкомсен, обкомсен секретарĕсем — оккупациленĕ районсенчи халăха тăшманпа кĕрешме пĕтĕçтерсе çĕклеме партие пулăшаççĕ.

1941-мĕш çулхи кĕрхи йывăр кунсенче столицăри комсомолецсемпе çамрăксем пĕтĕм халăхпа тата Хĕрлĕ Çарпа пĕрле, хăйсен вăйне шеллемесĕр, тăван Мускава хастаррăн хӳтĕлерĕç. 260 пин комсомолец фронта кайрĕç. Çĕр пин ытла çамрăк — арçынсемпе хĕрсем — укрепленисем тунă çĕрте ĕçлерĕç. Мускаври комсомол Тăван çĕршыва 59 герой — Совет Союз Геройĕсем ӳстерсе пачĕ. Виктор Талалихин тата Наталья Козлова, Илья Кузин тата Мария Поливанова — çак ятсем тата ытти сем те пирĕн çамрăксен чĕринче хамăр тăван çĕршывшăн ырă кăмăлпа тăрăшмаллине кăтартса тăракан ятсем пулса тăрĕç.

Ленинградри çамрăксем çав аслă хулан чаплă йăлисене сыхласа, ӳстерсе пыраççĕ. Ленинградри кашни вунă комсомолецран тăххăрĕшĕ фронта кайнă. Темиçе çĕр пин çамрăк — арçынсемпе хĕрсем — хула патне пымалли вырăнсенче укрепленисем тунă. Ленинградри комсомол Совет Союзĕн нумай геройĕсене тата темиçе пин орденоносец вĕрентсе ӳстерчĕ.

Çамрăк патриотсем фронтра çеç мар, тăсти шалти тылра та пĕтĕм халăхпа пĕрле нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешеççĕ.

Вăрçă пуçланнăранпа Урал хĕçпăшал туса кăларассине виçĕ кут ӳстернĕ. Çĕнĕ заводсем туса лартнă, хĕвеланăçĕнчен куçарса пынă предприятисене хута янă, çĕнĕ домнăсем, мартенсем, цехсем туса лартнă. Пур çĕрте те — заводсенче те, шахтăсенче те, стройкăсенче те — çамрăксен янăракан сассисем илтĕнеççĕ. Уралти предприятисенче комсомолецсемпе çамрăксен темиçе пин бригади ĕçлет. Комсомолецсем халĕ хăйсен аллипе Магниткăра 6-мĕш домнăна туса лартаççĕ. Нижний Тайгилта та домна тăваççĕ.

Мускавра, Ленинградра, Уралта, Атăл çинче, Çĕпĕрте, Инçетри Хĕвелтухăçĕнче, Вăтам Азире, Кавказ гăвĕсем хыçĕнче — пур çĕрте те тылри çамрăксем тăшмана çĕнтерес тесе кунĕн-çĕрĕн ĕçлеççĕ.

1941-мĕш çулхи июлĕн 3-мĕшĕнче Горькири Сталин ячĕпе тăракан заводри комсомолецсем сирĕн радиопа каланă историллĕ сăмахăра илтлемĕ хыççăн çапла йышăнчĕç: «Пирĕн юлташсем фронта кайрĕç. Апла пулсан, пирĕн вĕсемшĕн те, хамăршăн та ĕçлемелле», терĕç. Çапла «двухсотниксен» юхăмĕ пуçланса кайрĕ. Кĕске вăхăт хушшинчех вăл сарăлса кайрĕ.

Комсомолецсем фронтовой бригадăсем организацилерĕç. Çав бригадăсен членĕсем икĕ нормăран кая мар тума сăмах пачĕç. Фронтовой бригадăсем уйрăмах Мускавра нумай. Столицăри предприятисенче темиçе пин фронтовой бригада ĕçлет.

Çамрăксем, пионерсемпе шкул ачисем вăйлăн пулăшнипе, икĕ çул хушшинче промышленноçа 4 миллион тонна тимĕр-тăмăр пухса пачĕç.

Темиçе çĕр пин çамрăк чугун çул çинче ĕçлет. Хĕрлĕ Çарăн малта пыракан чаçĕсем хыçĕнчен юсав бригадисенчи çамрăксем пыраççĕ. Çамрăк железнодорожниксем, фронта хĕçпăшал, боеприпассем, апат-çимĕç вăхăтра çитерес тесе, хăйсен вăйне, пурнăçне шеллемесĕр ĕçлеççĕ.

Вăрçă фронта кайнă кадровиксем вырăнне станоксем патне çĕнĕ рабочисене — темиçе çĕр пин çамрăка тăратрĕ. Ремесла училищисемпе чугун çул училищисем тата ФЗО шкулĕсем кăна çĕршыва миллион çурă рабочи пачĕç. Çав çамрăксем вĕсем вĕреннĕ, вĕреннĕ вăхăтрах ĕçленĕ. Ремесла училищисемпе ФЗО шкулĕсенче вĕренекен çамрăксем вăрçă пуçланнăранпа 3 миллиард тенкĕлĕх япала туса кăларнă.

Ялти çамрăксем фронтшăн ырми-канми ĕçлеççĕ.

Темиçе вунă пин трактористка хĕрарăмсен трактор бригадисен Пĕтĕм Союзри ăмăртăвне хутшăнчĕç. Çав ăмăртура иккĕмĕш çул ĕнтĕ Рыбновски МТС-ри Дария Гармашăн трактор бригади мала тухрĕ. Гармаш бригади хăйĕн çулталăкри планне 500 процент тултарнă, иккĕмĕш хут ВЛКСМ Центральный Комитечĕн Хĕрлĕ ялавне илнĕ.

Сталинград облаçĕнчи Иловлински МТС-ри комсомолецсемпе çамрăксем пуçарнипе, пĕтĕм çĕршывĕпех тракторсем валли запаслă пайсем пухас ĕç сарăлса кайрĕ, çавна пула темиçе пин машинăна хута яма май килчĕ. Çамрăксем, ĕçрен пушанна вăхăтра ĕçлесе, çулталăк хушшинче 65 миллион тенкĕлĕх тĕрлĕ инструментсемпе запаслă пайсем пухрĕç, çĕнĕрен турĕç, юсарĕç.

Çак кĕркуннехи кунсенче ялти çамрăксем мĕнпур колхозниксемпе пĕрле часрах авăн çапса пĕтерме тата патшалăха Хĕрлĕ Çарпа пĕтĕм çĕршыв валли тырă тата ытти продуктсем парса татма тăрăшаççĕ. Çамрăксен транспорт бригадисем çĕнĕ тырра хатĕрлев пункчĕсене леçес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеççĕ. Новосибирск облаçĕнче çавăн пек бригадăсем хатĕрлев пункчĕсене 6.490 пин пăт тырă, Алтай крайĕнче 12 миллион пăт тырă леçнĕ.

Нумай облаçсенче çамрăксем кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе социализмлă ăмăрту сарса ячĕç.

Комсомолецсем пуçарнипе, çамрăксем оборона фондне укçа хывас ĕçе пуçласа ячĕç. 1942-мĕш çулхи ноябрьччен комсомол 500 миллион тенке яхăн пухрĕ тата ĕçлесе тупрĕ. Тамбов облаçĕнчи комсомолецсем чĕнсен, комсомол организацийĕсем Хĕрлĕ Çар валли хĕçпăшал тумашкăн çĕнĕрен укçа пухма тытăнчĕç те çур миллиард тенкĕ ытла пухса пачĕç.

Çамрăксем Хĕрлĕ Çар валли планран ирттерсе тăвакан продукци фончĕсем тума пуçласан, комсомолецсем çав юхăмăн пуçне тăчĕç.

Сталин ячĕпе тăракан автозаводри çамрăксем пуçарнипе 1942-мĕш çулхи январьте Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пуçланнă социализмлă ăмăртура фронта хĕçпăшал, çар хатĕрĕсем тата боеприпассем планран ирттерсе темиçе çĕр миллион тенкĕлĕх туса панă.

Комсомол янипе çамрăксем ĕç фронтне кайнă. Грузири тата Куйбышеври хĕрсем çакăн пек лозунг кăларса тăратрĕç: «Çамрăк хĕрсем — предприятисене!» Вара темиçе пин хĕр заводсене, фабрикăсене, шахтăсене, транспорта ĕçлеме кайрĕ. Ленинградри, Ярославльри, Вологдăри, Архангельскри, Кировскри темиçе вунă пин çамрăк вăрман хатĕрленĕ çĕрте стахановла ĕçлеççĕ.

Комсомолецсемпе çамрăксем нимĕçсем ишсе хăварнă хуласемпе ялсене юсама пулăшаççĕ.

Украинăра, Калинин, Смоленск облаçĕсенче тата ытти облаçсенче те комсомолецсемпе çамрăксен бригадисем нимĕçсем çунтарса хăварнă темиçе çĕр шкула, больницăна, вулав çуртне, тăшман аркатса хăварнă библиотекăсене, клубсене, стадионсене, пурăнмалли çуртсене юсаса е çĕнĕрен туса лартнă.

Вунпилĕк пин çамрăк патриот Сталинград хулине юсама кайрĕ. Фронтовиксен ачисемшĕн тăрăнас ĕçе совет çамрăкĕсем вăйлатрĕç. Комсомолецсемпе çамрăксем çав ачасене пулăшмашкăн сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 47 миллион тенкĕ укçа пухрĕç е воскресниксенче ĕçлесе тупрĕç.

Пирĕн çĕршывра çамрăк ачасем кирек хăçан та чи телейлĕ çынсем пулнă. Вĕсене халăх йăпатать, çакă вĕсен пурнăçне илемлетет. Вĕсем культурăллă та сывă ӳсĕр тесе, совет правительстви ниме те шеллесе тăмасть.

Çавăншăн пирĕн ачасем хамăр тăван çĕршыва, правительствăна, Сире, Иосиф Виссарионович, юратаççĕ, чунтан кăмăллаççĕ. Пионерсемпе шкул ачисем фронтовиксен çемьисене пулăшаççĕ, госпитальсене шефа илеççĕ, фронтри боецсемпе офицерсем патне кучченеçсем пуçтарса яраççĕ, вĕсемпе çыру çӳретеççĕ. Шкул мастерскойĕсенче вĕсем, вĕреннĕпе ĕçе пĕрле сыхăнтарса пырса, куллен кирлĕ япаласем тĕмĕн чухлĕ тăваççĕ.

Пĕлтĕр 4.700 пин вĕренекен уйхире тухрĕç, хăйсен аслă тăванĕсене тырă акма, çум çумлама, тырă вырма пулăшрĕç. Вĕсем 145.800 пин ĕçкунĕ ĕçлесе турĕç. Кăçал пионерсемпе шкул ачисем уйхирсенче тата лайăхрах ĕçлерĕç.

Кĕрешӳре тата ĕçре комсомол çитĕнет, пиçĕхет, ӳсет. Комсомола вăрçă пуçланнăранпа кăна 5.351.247 çамрăк кĕнĕ. 1.379.766 комсомолец партие кĕнĕ.

ВЛКСМ 25 çул тултарнă уява хатĕрленсе, эпир комсомолецсемпе çамрăксене большевиксен партийĕ тавра тата ытларах пĕтĕçтерме, çамрăксен пĕтĕм вăйне нимĕçсен фашистла захватчикĕсемпе çапăçма мобилизацилеме, фронта пĕтĕм вăйпа пулăшма, комсомол организацийĕсене организаципе политика тĕлĕшĕнчен тата ытларах çирĕплетме, вĕсене çамрăксен анлă массисемпе тата ытларах сыхăнтарма тăрăшатпăр.

Комсомолецсемпе çамрăксем, комсомол 25 çул тултарнă уява тивĕçлипе кĕтсе илес тесе, пур ĕçре те социализмлă ăмăрту пуçласа ячĕç. Кашни çамрăк пĕрлехи ĕçе хăйĕн пайне хывма тăрăшать, савăнăçлă куна пысăк ăнăçусемпе кĕтсе илме тăрăшать.

Хаклă Сталин юлташ!

Халь пирĕн пурин те пĕр задача çеç — пирĕн Совет çĕрне нимĕç захватчикĕсенчен тасатмалла, гитлерла ирсĕрсене совет çыннисен юнĕпе куççулĕсемшĕн пĕр шеллемесĕр тавăрмалла. Комсомолецсем, фронтрипе тылри мĕнпур çамрăксем, Ленинпа Сталин партийĕ тавра, унăн Центральнăй Комитечĕ тавра нихăçанхинчен те çирĕпрех пĕрлешнĕ.

Эпир, комсомолецсем, мĕнпур çамрăксене малашне те большевиксен партине, юратнă тăван çĕршыва тата Сире, Сталин юлташ, чунтан парăнса ĕçлеме вĕрентетпĕр.

Хĕçпăшалпа тата ĕçпе, вунă хут ытларах вăй хурса ĕçлесе, дисциплинăпа йĕркелĕхе тата ытларах ӳстерсе, эпир тăшмана çĕнтерессине куллен кун тултаса пырăпăр. Йăлтах фронт валли, йăлтах çĕнтерӳшĕн — акă пирĕн халăхăн йывăр вăхăтри лозунг.

Эпир, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн çамрăк боецĕсемпе офицерĕсем, партизансемпе партизанкăсем, совет хĕçпăшалĕн чысне вараламăпăр, тесе тупа тăватпăр. Çар мастерлăхне пĕр чарăнмасăр ӳстерсе пырса, хамăра панă техникăна çине тăрса вĕренсе алла илсе пырса, дисциплинăна куллен çирĕплетсе пырса, эпир тăшмана хирĕç хамăр вăя, хамăр пурнăçа шеллемесĕр çапăçăпăр. Халăхсене ирĕке кăларас чыслă та чаплă ĕçе тумалла пулчĕ пирĕн. Эсир панă приказа — пирĕн тăван çĕре гитлерла ирсĕрсенчен тасатма хушнине — эпир вĕçне çитичченех пурнăçа кĕртĕпĕр. Пĕтĕм халăхпа пĕрле эпир, комсомолецсем, совет çамрăкĕсем, тăшмана аркатса тăкмашкăн Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине пурне те туса парас тесе тата вăйлăрах ĕçлĕпĕр, хамăрăн пĕтĕм вăя мобилизацилĕпĕр. Сире çак ĕççене тума сăмах паратпăр:

Эпир ĕç тухăçлăхне тата ытларах ӳстерĕпĕр, ĕçри дисциплинăна пĕр чарăнмасăр çирĕплетсе пырăпăр, Главнăй Командовани фондне планран ирттерсе самолетсем, танксем, тупăсем, пулеметсем, темиçе миллион снарядпа патрон туса парăпăр.

Двухсотниксен тата фронтовой бригадăсен йышне ӳстерĕпĕр.

Тимĕр-тăмăр пухса тиесе ямалли плана ирттерсе тултарăпăр.

Çар ĕçне çине тăрса вĕренĕпĕр, всевобуч работникĕсене Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ валли резервсем хатĕрлеме пулăшăпăр.

1944-мĕш çулта тырпул нумай туса илмешкĕн, выльăх-чĕрлĕхсене тата ытларах ĕрчетмешкĕн пĕтĕм халăхпа пĕрле ырми-канми ĕçлĕпĕр. Сире çак ĕççене тума сăмах паратпăр:

Колхозсене ăнăçлăн авăн çапса пĕтерме, патшалăха тырă парса татма тата кĕрхи çĕртме тума пулăшăпăр.

Тракторсемпе плугсене срокра юсаса пĕтерме пулăшăпăр. Хуласенчи предприятисенче ĕçрен пушанна вăхăтра çамрăксен вăйĕпе МТС-сем валли темиçе çĕр пин запаслă пайсемпе инструментсем туса парăпăр. Комсомолецсемпе çамрăксен вăйĕпе планран ирттерсе оборона фончĕ валли темиçешер гектар тырă акса хăварăпăр.

Колхозсенчи вăйлă тырпул звенисен ĕç опытне анлăн сарăпăр.

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра)

Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзне

ВКП(б) Центральный Комитечĕ Ленинла комсомола вăл 25 çул тултарнă кун хĕрӳллĕ салам ярать.

Комсомол хăйĕн юбилейне совет халăхĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне, пирĕн çамрăксен телейне килсе тапăннă нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсене хирĕç пыракан отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче паллă тăвать. Нумай миллионлă комсомол тата совет çамрăкĕсем пĕтĕм халăхпа пĕрле хăйсен Тăван çĕршывне хӳтĕлеме çĕкленчĕç.

Большевиксен партийĕ ертсе пынипе комсомол çамрăксене 25 çул хушши ленинизм майлă, тăван çĕршыва парăнса тăма тата хăйĕн халăхĕшĕн пĕтĕм чĕререн ĕçлеме вĕрентсе пырать. Комсомол Ленин—Сталин партийĕн шанчăклă помощникĕ, боевой резервĕ пулса тăрать.

Мирлĕ социализмлă строительство çулĕсенче комсомолецсемпе комсомолкăсем — советăн çамрăк ăрăвĕн чи лайăх представителĕсем — промышленноçра, ялхуçалăхĕнче, транспортра ударлă ĕçлесе, хăйсене чапа кăларчĕç. Вĕсем фабрикăсемпе заводсене, колхозсемпе совхозсене туса йĕркелекенсен малти речĕсенче пулнă, кучухнехи наукăпа культурăна вĕренсе алла илсе пынă.

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче совет çамрăкĕсем тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕçлĕхне тарăн ăнланса тăнине тата тăшмана çĕмĕрсе тăкас шухăш-кăмăлпа çунса пурăннине кăтартса пачĕç. Вĕсем хамăр халăхăн геройла традицийĕсене, большевиксен партийĕн çапăçури традицийĕсене тивĕçлипе йышăнса илекенсем пулчĕç. Советăн çамрăк воинĕсем — летчиксем, танкистсем, артиллеристсем, пехотинецсем, мĕнпур йышши çарсен боецĕсем, çамрăк партизансемпе партизанкăсем ирсĕр захватчиксене хирĕç пĕр шиксĕр çапăçаççĕ. Пирĕн çамрăксемпе хĕрачасем, фронта кайнă ашшĕсемпе пиччĕшĕсен вырăнне тăрса, производствăра хĕрӳллĕн ĕçлесе тăшмана çĕмĕрме Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ. Совет çамрăкĕсем тĕрлĕ пĕлӳсене, производство техникине тата çар ĕçне ăнăçлăн вĕренсе алла илеççĕ. Нимĕç аркатуçисенчен ирĕке кăларнă районсенче комсомол хуçалăхпа культура учрежденийĕсене юсаса ура çине тăратма хĕрӳллĕн тытăнчĕ. Çамрăк патриотсем хăйсен пĕтĕм вăйне социализмлă тăван çĕршыва хӳтĕлес тата тĕреклетес ĕçе параççĕ.

Ленинла комсомол Тăван çĕршыв умĕнчи хăйĕн тивĕçлĕхне чыслăн пурнăçа кĕртет, хамăрăн çĕре захватчиксенчен пĕтĕмĕшпех ирĕке кăларассишĕн малашне те вăя шеллемесĕр кĕрешĕ, совет çамрăкĕсене хăй тавра пĕрлештерсе ертсе пырĕ, вĕсене патриотизм майлă, Ленин хушса хăварнисене тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пыма, большевиксен партине чĕререн парăнса тăма вĕрентсе пырĕ тесе, ВКП(б) Центральный Комитечĕ шансах тăрать.

Сывă пултăр Ленинла комсомол!

Пирĕн совет çамрăкĕсене — мухтав!

ПĔТĔМ СОЮЗРИ КОММУНИСТСЕН (БОЛЬШЕВИКСЕН) ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧĔ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Елчĕк районĕнчи старши ветеринари врачне Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен.

Лашасен пуç мими чирне сыватмалли лайăх майсем шыраса тупас тĕлĕшпе ăнăçлăн ĕçленĕшĕн тата çав чирпе кĕрешес тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсемшĕн Елчĕк районĕнчи старши ветеринари врачне Александр Иванович Улендеева Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиум Секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1943 çулхи октябрĕн 29-мĕшĕ

Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсама организованно тытăнар

Çак иртнĕ кунсенче Шупашкарта МТС директорĕсемпе старши механиксен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсама хатĕрленес тата вĕсемпе ĕçлеме кадрсем вĕрентсе хатĕрлес ыйтусене сӳтсе яврĕ.

Улатăр тата Чкаловски МТС-сен директорĕсем тунă отчетсенчен те тата ытти директорсем тухса каланинчен те çакă курăнчĕ: республикăри МТС-сем тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсама питех те начар хатĕрленнĕ. МТС директорĕсем чылайĕшĕ иртнĕ çулта тунă йăнăшсене шута илмен, тракторсене юсама кăçал та начар хатĕрленнĕ. МТС хуçалăхне, машинăсене йĕркеллĕ тытса усрассишĕн, вĕсене хăйсен пĕтĕм вăйĕпе ĕçлеттерессишĕн тăрăшни курăнмасть. Кĕраки тата тырă вырас ĕç тахçанах вĕçленнĕ пулин те, нумай МТС-сен сеялкисем, культиваторĕсем, плугĕсем колхозсен уйхирĕсенчех лараççĕ, çĕмĕрĕлнĕ тракторсемпе комбайнсене те МТС-сене илсе пыман.

Тĕпрен илсен, ялхуçалăх ĕçĕсем республикăра вĕçленчĕç ĕнтĕ. Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсас ĕçе анлăн пуçлама вăхăт. Анчах çак ĕçе туни курăнмасть. Йĕпреç, Елчĕк, Шăхасан тата Канаш МТС-ĕсем çеç, иртнĕ çулта пулнă йăнăшсене шута илсе, кăçал тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсама тĕплĕнрех хатĕрленчĕç, вăхăтра тытăнчĕç. Ку МТС-сем 10—12-шер трактора тата ытти чылай машинăсене юсаса лартнă та ĕнтĕ.

Кăçал республикăри чылай МТС-сем иртнĕ çулхинчен япăхрах ĕçлерĕç. Республика тракторсемпе тумалли çулталăкри плана пурнăçлаймарĕ. Çакăн тĕп сăлтавĕ—иртнĕ çул тракторсемпе ялхуçалăх машинисене япăх юсанинче, чылай МТС-сем çуракине хатĕрленсе çитмесĕр тухнинче пулчĕ. Çĕрпӳ, Пăрачкав МТС-сен руководителĕсем иртнĕ кĕркуннепе хĕлле тракторсемпе машинăсене юсас ĕç çине çиелтен пăхнă, çак ответлă ĕçе ертсе пыман, машинăсене ячĕшĕн кăна юсанă. Çавăнпа кăçал ку МТС-сем хăйсен тракторĕсемпе çĕршер гектар та тăвайман.

Анчах Çĕрпӳ, Пăрачкав МТС-ĕсен, вĕсемпе пĕрлех тата ытти хăшпĕр МТС-сен руководителĕсем те кăçал та тракторсемпе машинăсене юсама хатĕрленес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлемеççĕ. Çĕрпӳпе Пăрачкав МТС-ĕсен машинăсене лартма сарайсем хатĕр мар, мастерскойĕсен оборудованине юсаман, ĕçлеме инструментсем çитмеççĕ, мастерскойĕсене ăшăтма вутă хатĕрлемен.

Канашлу тата механизаторла кадрсем вĕрентсе кăларакан Канашри шкулăн директорĕн Коган юлташăн информациллĕ пĕлтерĕвне итлерĕ. Вăл шкул кăçал хăйĕн ĕçне октябрĕн 25-мĕшĕнче пуçламаллаччĕ. Анчах шкулта халĕ те вĕрентме пуçламанха, мĕншĕн тесен МТС директорĕсем Наркомземăн приказне пурнăçламан, вĕрентмелли кадрсене вăхăтра уйăрса паман. Шкулта 110 çын вĕренмелле пулсан, октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне мĕн пурĕ те 22 çын çеç пухăннă.

Трактористсемпе комбайнерсем вĕрентсе хатĕрлемелли курссене уçма та чылай МТС-сем хатĕр мар.

Канашлура ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕсем Чарыков, Белков тата ЧАССР Совнаркомĕн председателĕ Матвеев юлташсем пулчĕç.

Канашлу вĕçĕнче ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ сăмах каларĕ. Вăл çакна палăртрĕ. Паянхи куна çитсе те республикăри хăшпĕр колхозсем авăн çапса пĕтерменни тата государство умĕнчи обязательствăсене парса татас ĕçе часса пыни МТС-сем енчен колхозсене тивĕçлĕ таран пулăшу паманнипе пулчĕ. Çакна МТС директорĕсен шута илмелле.

Мĕнпур машинăсене халех МТС-сен килкартине пухмалла, вĕсене старши механиксем бригадирсенчен, тахника тĕлĕшĕнчен пăхса, актсемпе илмелле. Машинăсемпе пĕрлех пĕтĕм ĕç хатĕрне, горючи пичкисене йăлтах пухса илмелле.

МТС директорĕ вăл — государственнăй предприятин руководителĕ. Вĕсене государство оборона завочĕсен директорĕсем пекех ответлă пулма хушать. Машинăсене лайăх упраса хĕл каçармалла. Çирĕп юсамалла.

Совет Союзĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем И. В. Сталин юлташа янă çыру

(Юлашки. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра)

Выльăх-чĕрлĕхсене лайăх тăрантарса ăшă çуртсенче хĕл каçарас ĕçе — выльăх витисене юсас, ăшă тытмалла тăвас, выльăх апачĕ турттарса пырас, ăна расходланине тĕрĕслесе тăрас ĕçе организацилеме пулăшăпăр.

Çамрăк выльăхсене пăхса çитĕнтерес ĕçе лайăхлатмашкăн выльăх-чĕрлĕх фермисене чи лайăх комсомолецсене ярăпăр.

Ирĕке кăларнă районсенĕ анлăн пулăшмашкăн эпир пĕтĕм халăхпа пĕрле мĕн кирлине пурне те тăвăпăр. Сире çак ĕçсене тума сăмах паратпăр:

Смоленск, Калинин тата ытти облаçсем тунă пек, ирĕке кăларнă ялсенче колхозсемпе колхозниксен пурăнмалли тата хуçалăх çуртсене юсамашкăн комсомолецсемпе çамрăксен бригадисене тăвăпăр.

Сталинграда юсас ĕçе тата активлăнрах туса пырăпăр.

Донбаса ура çине тăратма пулăшăпăр.

Ирĕке кăларнă районсенче машинно-тракторнăй станцисене çĕнĕрен йĕркелесе ярас ĕç çине уйрăмах хытă çавăрăнса пăхăпăр.

Эсир, Сталин юлташ, кадрсем пурне те татса параççĕ, тесе каланине эпир асра тытатпăр. Халăх хуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсем валли, Хĕрлĕ Çар валли, Тинĕс-Çар Флочĕ валли халĕ пирĕн çĕршыва пысăк квалификациллĕ специалистсем кирлĕ.

Сире çакăн пек сăмах паратпăр: совет студенчĕсем тата ытларах çине тăрса вĕренĕç, дисциплинăна çирĕплетсе пырĕç, хăйсен ĕçне лайăх пĕлекен тата хăйсем умне лартнă задачăсене пурнăçа кĕртме пултаракан работниксем пулма хатĕрленĕç.

Эпир хамăр ума уйрăмах çакăн пек задача лартатпăр: пурне те обязательнăй йĕркепе вĕрентме хушакан закона 1943—1944-мĕш вĕренÿ çулĕнче пĕтĕмпех пурнăçа кĕртме çутĕç-органĕсене пулăшмалла. Сире çак ĕçсене тума сăмах паратпăр:

Шкул çулне çитнĕ пĕр ача та шкул тулашĕнче ан юлтăр тесе тăрăшăпăр. Шкулсене оборудовани, нагляднăй пособисем çителĕклĕ пама, вутă хатĕрлесе тата турттарса пама пулăшăпăр.

Ашшĕ-амăшĕсĕр тăрса юлнă ачасем валли çĕнĕ ача çуртсем тума пулăшăпăр.

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Çак хăрушă вăрçă кунĕсенче пирĕн пурин те пĕр шухăш кăна: нимĕçсен фашистла çарне часрах аркатса тăкасси. Тăшмана çав тери курайманни пирĕн чĕресене хĕртсе тăрать. Эпир пурне те асра тытатпăр: Керчьри хăрушă канавсене те, Краснодарти «душегубкăсене» те, Сталинград ишĕлчĕкĕсене те, Черниговри кĕле те. Эпир Зоя Космодемьянскаяна, Лиза Чайкинăна, Шура Чекалина, Краснодон геройĕсене тискеррĕн асаплантарса вĕлернине астăватпăр. Эпир тăшмана унăн мĕнпур тискер ĕçĕсемшĕн, совет çыннисен юнĕсемпе куççулĕсемшĕн тавăрăпăр.

Хамăр Тăван çĕршыва, большевиксен партине юратни пирĕн çав тери аслă çĕршывăн тĕрлĕ кĕтессисенче пурăнакан çамрăксене тата ытларах пĕрлештерчĕ, пĕр çемье туса хучĕ. Пирĕн тĕрлĕ нациллĕ державăри мĕнпур халăхсен представителĕсем хамăр Тăван çĕршыва паттăр ĕçсем туса чапа кăларасшăн пĕр-пĕрипе ăмăртаççĕ.

Эпир, Ленинпа Сталинăн аслă идейисене, ялав пек йăтса, тата пирĕн ĕç çиеле тухассине çав тери çирĕп ĕненнине мĕнпур йывăрлăхсем витĕр илсе тухрăмăр. Эпир хăюллăн малалла пăхатпăр, эпир çапăçусен вут-çулăмĕнче хамăр çĕнтерессе çывхарнине куратпăр.

Эпир халăх ячĕпе тÿррĕн калатпăр:
Ĕçлетпĕр фронтшăн çамрăк вăй-халпа,
Цехра, заводра, шахтăра тăрăшатпăр,
Хастарлăн ĕçлетпĕр кашни колхозра.

Эпир вилнисемшĕн пĕр саслăн калатпăр,
Хаяр тавăру тăшмана халь кĕтет,
Эпир ялава çирĕпреххĕн тытатпăр,
Ÿсет, хутшăнать пирĕн çамрăк ĕрет.

Эпир вăрçăра харсăрланнă, чапланнă,
Пире хура тăвăл асни хăруш мар,
Девизăмăр пирĕн: сыв пултăр çут Сталин,
Сыв пултăр çĕршывăмăр! — тетпĕр хастар.

Эпир комсомол ячĕпе тупа тăватпăр:
Манмастпăр тăшман урнине,
Çĕршывшăн, çĕршывшăн хаяр тавăратпăр
Шăлса тасататпăр çĕлен кĕгĕвне.
Пирте курайманлăх çĕкленчĕ пушар пек,
Юнланнă чĕремĕр хаярран тапать,
Эпир тăшмана пур çĕрте те шаккатпăр
Ăна тĕп тума пире халăх хушать.

Хастар чĕресем вăрçăра хурçăланнă,
Сулмак аллăсем çирĕпленнĕ ĕçре;
Çĕнтерĕпĕр эпир, çĕнетĕпĕр эпир
Тăшман аркантарнă, тустарнă хире.

Пус хуна туссен килйышне хĕрхенетпĕр,
Ан макăртăр, тетпĕр халь тăлăх турат,
Эпир вĕсене юрататпăр, пăхатпăр,
Пур халăх савать, ÿстерет, çупăрлать.

Антив ĕлĕкхи пек вĕсем хавасланччăр
Хĕвел сăн-сăпатлăн вылятăр хитрен,
Пĕччен амăшсем хурланса ан ахлатчăр,
Ачине пăхчăр та кулччăр вĕсем.

Эпир мухтанмастпăр, хĕрÿллĕн калатпăр:
Хаяр вăрçăра та хĕрÿ ĕç хĕлте
Маттуррăн ĕçлетпĕр, сатуррăн вăрçатпăр,
Усетпĕр шкулта, окопра та хирте.

Эпир çут çанталăк вăйне те тĕпчетпĕр,
Этемшĕн ĕçлетĕр çак çутă тĕнче!
Сăмахăмăр пирĕн: вĕренĕр, вĕренĕр,
Ас-хакăл вылятăр пуçра, куççенче.

Сăмахăмăр пирĕн тупă пек янратăр,
Итлетĕр чĕремĕр пĕр шутлă таппа:
Санпа эпир, парти, санпа çеç, аннемĕр,
Ĕçре, вăрçăра, хăть ăçта та санпа.
Хастар пул, хăю пул, тÿрĕ чĕреллĕ,—
Пилленĕ Ильич çамрăк кĕрĕм йышне
Амăрткайăк ятнĕ вăйли çеç илме тивĕç,
Сталин паттăрĕ—тÿрĕ кăмăллă этем.

Эпир Ленин ячĕпе çапла калатпăр:
Усмастпăр хамăрăн харсăр пуçа,
Çулпуç хушнипе, хăть вилер те, тăватпăр,
Çулпуç ячĕпе çĕкленетпĕр вăрçа.
Хĕрÿ вут-хĕм витĕр эс çул кăтартатăн,
Утатпăр патваррăн, çапатпăр хаяр —
Сыв пултăр хĕвелĕмĕр! Сыв пултăр çут Сталин!
Фашист вăрă-хурахĕ тĕп пултăр, тĕп пултăр!

Хамăр Тăван çĕршыв умĕнче, халăх умĕнче эпир паян Сире, Пирĕн аттемĕр, çакăн пек чаплă сăмах паратпăр: пирĕн çĕре пĕр нимĕç те пулин таптама пăрахиччен пирĕн чĕресем канăç курас çук; çак аслă кĕрешÿ пĕтиччен пирĕн алăсем канса ларас çук; Тăван çĕршыв пире ырми-канми ĕçлеме хушма пăрахиччен пирĕн пуç мимисем ывăнас çук. Пĕр çул та пире йывăр туйăнмĕ, пĕр чăрмав та çĕнтермелле мар пек туйăнмĕ. Гитлерла пуçкасакансене ылхан та вилĕм!

Сывă пултăр пирĕн аслă Тăван çĕршыв!

Сывă пултăр пирĕн большевиксен чаплă партийĕ, çамрăк ăрăва ывăнма пĕлмесĕр тата тăрăшса вĕрентсе ÿстерекенскер, пире пĕр çĕнтерÿ патĕнчен тепĕр çĕнтерÿ патне илсе пыраканскер!

Сывă пултăр пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар, хăйĕн штыкĕпе курайми тăшманшăн вилĕм илсе пыраканскер!

Сывă пултăр пирĕн учительпе çулпуçăмăр Сталин юлташ!

Çак çырăва Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн чаçĕсенчи, партизансен отрячĕсенчи, предприятисенчи, колхозсенчи, совхозсенчи, МТС-сенчи, ремесла тата чугун çул училищисенчи, ФЗО шкулĕсенчи, шкулсенчи, аслă шкулсенчи тата учрежденисенчи комсомолецсемпе çамрăксен пухăвĕсенче сÿтсе явса алă пуснă.

Çак çырăва 17.319.890 çын сÿтсе явса алă пуснă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ОКТЯБРĔН 28-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Октябрĕн 28-мĕшĕнче ДНЕПР шывĕн анатри тăрăхĕнчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри районра пирĕн çарсем, наступлени туса пырса, уйрăм участоксенче 5 километртан пуçласа 20 километр таран малалла куçнă. Запорожье облаçĕнчи НИЖНИЕ СЕРОГОЗЫ ятлă район центрне тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 30 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вĕсен шутĕнче ЗЛАТОПОЛЬ, КРАСОВИЧ, ГОГОЛЕВКА, ДЕМЬЯНОВКА, НОВО-АЛЕКСАНДРОВКА, ВЕРХНИЕ СЕРОГОЗЫ, КАЛГА, СРЕДНЕЕ, АННОВКА, ВОЛКАНЕШТЫ, ДАВИДОВКА ятлă пысăк ялсем пур.

ДНЕПР шывĕн кукринче ДНЕПРОПЕТРОВСКРАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, çаплах наступлени туса пынă, темиçе ял тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче КРАСНЫЙ СТАВ, ОДАРОВКА, НОВО-КАЛИНОВКА, КРАСНЫЙ ПРОМИНЬ, ПАВЛОВКА, КРАСНЫЙ ЯР ятлă пысăк ялсем пур.

КРИВОЙ РОГ хули енче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тănине çĕнтерсе, çаплах наступлени туса пынă, темиçе ял тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче НОВО-СТАРОДУБ, ОЛИМПИАДОВКА, МАРИЯНОВКА, СПАСОВО, ФЕДОРО-ШУЛИЧИНО, БЛАГОДАТНОЕ, МОИСЕЕВКА, АНАСТАСЬЕВКА ятлă пысăк ялсем пур.

ВИТЕБСК хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем, тĕллĕн-тĕллĕн çапăçса, 5 километртан пуçласа 8 километр таран малалла куçнă, Витебск облаçĕнчи район центрне СУРАЖ ВИТЕБСКИЙ хулине тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 80 пункта ытла йышăнса илнĕ, вĕсен шутĕнче АНДРЕЕВО, ДОЛГАНЫ, БОБРОВО, СЕЛО, БОЛЬШОЕ ЗАБОРОЧЬЕ, МАЛОЕ ЗАБОРОЧЬЕ, КОВАЛЕВОРОДЬКИ, САЗАНЫ, ОСТРОВСКИЕ ятлă пысăк ялсем пур.

Фронтăн ытти участокĕсенче вăйлă разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе миномётсенчен пересе тăнă.

Октябрĕн 27-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 25 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата çÿлелле перекен артиллери тăшманăн 32 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Днепр шывĕн анатри тăрăхĕнчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем çаплах ăнăçлăн наступлени туса пынă. Пирĕн çăмăллăн куçса çÿрекен чаçсем тăшмана хыççăнах хăваласа пырса аркатаççĕ. Пĕр соединени чаçĕсем паян ахаль çулсен питех те кирлĕ тĕввине—Запорожье облаçĕнчи Нижние Серогозы ятлă район центрне тытса илнĕ. Кун каçиччен нимĕçсен 3.000 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ. 11 танк, 25 артиллери батарейине тата хăй тĕллĕн çÿрекен 7 тупа пĕтерсе тăкнă. Пирĕн çарсем нимĕçсенчен трофейăсем нумай тытса илнĕ. Пришиб ятлă чугун çул станцинче совет боецĕсем боеприпассен, апат-çимĕçĕн пысăк склачĕсене тата çар япалисем тиенĕ 250 вагонпа платформăна тытса илнĕ. Акимовка станцинче çар хатĕрĕсем тиенĕ 190 вагона тытса илнĕ. Пĕр чаçри боецсем тăшмана атакăланă та ăна пысăк çухатусем кÿнĕ. Юсавлă 65 тупă, ултă кĕпçеллĕ 21 миномет, пулеметсем, винтовкăсем, автоматсем нумай, боеприпассен складне, япала складне, инженерла пурлăх складне тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

Пирĕн авиаци тăшман çарĕсен колоннисем, автомашинисемпе техники çине бомбăсем пăрахнă. 300 автомашинăпа лава ытла çĕмĕрсе тăкнă е сиенленĕ, нимĕç пехотине пĕр полка çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата çÿлелле перекен артиллери тăшманăн 14 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Днепр шывĕн кукринче Днепропетровскран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединени боецĕсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, Мокрая Сура шывĕ урлă каçнă та темиçе ял тытса илнĕ. Çав ялсемшĕн çапăçнă чухне нимĕçсен 1.500 салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 27 тупă, 42 миномет, çар хатĕрĕсем тиенĕ 100 автомашинăна çити пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Павловка ялĕ районĕнче нимĕçсен 46-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи пĕр ротăна пĕтĕмпех тыткăна илнĕ.

* * *

Кривой Рог хули енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Тăшман кунта хăйĕн пехотипе танкĕсен çĕнĕ вăйĕсене куçара-куçара килет, темиçе хутчен те контратака тунă. Пĕр соединени боецĕсем гитлеровецсен контратакисене сирсе янă та, малалла куçса, тăшмантан вăйлă тĕреклетнĕ темиçе яла тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 800 виллине ытла шута илнĕ. Нимĕçсен 12 танкне тата хăй тĕллĕн çÿрекен 2 туппине персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. 23 тупă, 55 пулемет, боеприпассен складне, тырă, медикамент тата саперла пурлăх склачĕсене тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн çарсем нимĕçсен артиллери полкне аркатса тăкнă, çав полкăн пĕтĕм пурлăхне тытса илнĕ.

* * *

Витебск хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем çапăçа-çапăça малалла куçса пынă, Сураж-Витебский хули патне тухнă. Ку хула Каспля шывĕ Хĕвеланăç Двина шывне юхса кĕнĕ вырăнта ларать. Нимĕçсем ку хуларан тĕреклĕ оборона тĕвви туса хунă. Хулан çÿллĕ вырăнта тăракан вăтам пайĕнче нимĕçсем пемелли вырăнсем туса тултарнă. Çав вырăнсенчен хулана пымалли çывăхри çулсене пурне те тĕл персе тăма пултарнă. Хула тавра гитлеровецсем темĕн чухлĕ укреплени туса хунă, вĕсем умне минăсем лартса тухнă. Пирĕн çарсем Хĕвеланăç Двина шывĕ урлă Сураж хулинчен çурçĕртерехри вырăнта каçнă та Сураж хулин хĕррине кĕрсе кайнă. Пирĕн ытти чаçсем Каспля шывĕ урлă каçнă та Суражпа Витебск хушшинчи шоссе çулне татнă. Совет боецĕсем пур енчен те хăвăрттăн пырса çапнă та нимĕçсене аркатса тăкнă, Витебск облаçĕнчи район центрне—шоссе тата ахаль çулсен питех те паха тĕвви пулса тăракан Сураж-Витебский хулине тытса илнĕ. Тăшмана çынсем тĕлĕшпе те, техника енчен те пысăк çухатусем кÿнĕ. Наступлени туса пырса, пирĕн чаçсем малалла ăнăçлăн куçса пынă, халăх пурăнакан ытти 80 пункта ытла тытса илнĕ.

* * *

Финн заливĕнче тăшманăн 2 тральщикне шыва путарнă. Хĕрлĕ ялавлă Балтика флочĕн летчикĕсем сывлăшри çапăçура нимĕçсен 6 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Латыш партизанĕсен икĕ отрячĕ пĕр уйăх хушшинче нимĕçсен 17 çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Çав крушенисенче темиçе паровоз тата çар хатĕрĕсемпе тăшман çарĕсене турттарса пынă 100 вагон ытла çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ. Латыш партизанĕсен ушкăнĕ пĕр чугун çул станцине кĕрсе кайнă та 2 паровоза сирпĕнтерсе янă тата чугун çул линине ишсе хăварнă.

* * *

Нимĕçсен 62-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 179-мĕш полкри штаб ротинчен Днепродзержинск районĕнче тыткăна илнĕ ефрейтор Вилли Шультес çапла каласа панă: «Пирĕн дивизие ку участока кĕтмен çĕртен илсе килчĕç. Вара çул çинчен тÿрех çапăçăва кĕртсе ячĕç. Командовани çапла çирĕп приказ пачĕ: «Вырăссене Днепр шывĕн сылтăм енчен çапса кăлармалла та малтанхи позицисене каялла тытса илмелле. Пире артиллери батарейисем тата хăй тĕллĕн çÿрекен нумай тупăсем пулăшса пычĕç. Ку çапăçура танксен пысăк вăйĕсем те пулчĕç. Артиллери пеме чарăнсан, 16 сехетре 179-мĕш полкри 3-мĕш батальон атака пуçласа ячĕ. Анчах та ытти батальонсем ăна пулăшмарĕç. Пĕрремĕш батальон темĕн пирки чарăнса тăчĕ, иккĕмĕш батальонри салтаксем приказа пăхăнмарĕç, атакăна каймарĕç, мĕншĕн тесен вырăссен миномечĕсемпе туписем вăйлăн персе тăчĕç. 3-мĕш батальона пысăк çухатусем кÿчĕç, çавăнпа вăл каялла малтанхи вырăнах чакрĕ. Тепĕр кунне дивизи чаçĕсем тата пысăкрах çухату тÿсрĕç, анчах та пĕр метр тăршшĕ те малалла куçаймарĕç. Кăнтăр тĕлĕнче вырăссем хăйсем наступлени пуçласа ячĕç. Пирĕн салтаксем хăраса ÿкрĕç те тĕрлĕ çĕрелле тарма пуçларĕç. Хăрушă паника пуçланса кайрĕ. Пурте пăтрашса кайрĕç. Эпĕ тата манăн юлташ Андреас Польцмахер окопра юлтăмăр, вара тыткăна парăнтăмăр».

* * *

Орел облаçĕнчи Новозыбков хулинчи çынсем нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тунă усал ĕçсем çинчен акт çырнă. Актра çапла каланă: «Гитлерла пуçкасакансем пирĕн хулара пурăннă вăхăтра хулари тата ун таврашĕнчи мирлĕ халăха темиçе пин çынна асаплантарса вĕлерчĕç. Нимĕçсене хăваласа кăларнă хыççăн Карховски вăрманта станци хыçĕнче фашистсем вĕлернĕ çынсен пысăк масарне тупнă. 7 шăтăкра арçынсен, хĕрарăмсен тата ачасен 2.860 виллине тупнă. Çавăн пекех нимĕçсем асаплантарса вĕлернĕ совет гражданĕсен темĕн чухлĕ виллине Деменск вăрманĕнче, опытлă станци çывăхĕнче тупнă. Халĕ çакна пĕлнĕ: гестаповецсем çакăнта кашни кунах тытса хупнă çынсене иле-иле килнĕ, темĕн тĕрлĕ асаплантарнă хыççăн вĕсене вĕлерсе пынă. Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе каялла чакма пуçласан, нимĕçсен фашистла вăрă-хурахĕсем хулари лайăх çуртсене пурне те сирпĕнтерсе ячĕç. Гитлеровецсем вокзала, «Волна революции» ятлă фабрикăна, крахмал заводне, виçĕ больницăна, халăх пурăнакан 250 çурта тата ытти çуртсене те ишсе антарчĕç е çунтарса ячĕç».

Акт çине алă пуснă: нимĕçсен фашистла захватчикĕсен тискер ĕçĕсене тĕрĕслеме тунă комисси членĕсем—Новозыбков хули çыннисем: Гордеенко, Брохман, Царенко, Еграшин, Мельников, Французов, Барбачи, Савченко, Бабичева тата Сухоцкая.

Пирĕн авиаци Минск, Калинковичи, Апостолово чугун çул тĕввисене тапăнни

Октябрĕн 28-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци нимĕçсен Минск, Калинковичи тата Апостолово чугун çул тĕввисенче капланса тăнă çар эшелонĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пырса тивнипе темиçе поезд çĕмĕрĕлнĕ. Пушарсем тухнă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

Пирĕн виçĕ самолет хăйсен базисене каялла таврăнман.

Дональд М. Нэльсон господин Совет Союзĕнчен кайни

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен вăрçă хатĕрĕсем тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен Управленин Председателĕ Дональд М. Нэльсон господин октябрь уйăхĕн 28-мĕшĕнче Совет Союзĕнчен тухса кайнă.

Дональд М. Нэльсон господин Совет Союзĕнче пулнă вăхăтра чылай хуласенчи промышленность предприятийĕсемпе культура учрежденийĕсене çитсе курнă. (ТАСС).

Ют çĕршывсенче

ЛИТВА ХАЛĂХĔ ГИТЛЕРЛА ОККУПАНТСЕМПЕ КĔРЕШЕТ

ЛОНДОН, октябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Литвара чугун çулсем çинче сăтăрла ĕçсен хисепĕ ÿснĕçемĕн ÿссе пырать. Оккупациллĕ влаççем нумаях пулмасть кăларнă приказра литовецсем чугун çул кĕперĕсене çĕмĕрсе пĕтернине йышăнаççĕ. Оккупациллĕ влаççем сăтăрла тата саботажла ĕçсем тăвакансене тата çав ĕçсене хутшăннă çынсен çемьисене урăх çĕре кăларса ярассипе тата вĕсен мĕнпур пурлăхне пĕтерсе тăкассипе хăратаççĕ.

Октябрьти социализмлă аслă революци XXVI çул тултарни çинчен тумалли докладăн

ПЛАНĔ

1. Октябрьти социализмлă аслă революци XXVI çул тултарнине эпир совет халăхĕпе Хĕрлĕ Çар гитлерла йыткĕтĕвĕсене тăван çĕршывран хăваласа кăларасшăн хăйсен пурнăçне шеллемесĕр кĕрешнĕ вăхăтра уявлатпăр. Хĕрлĕ Çарпа пĕтĕм совет халăхĕ, Октябрьте çĕнтерсе илнисене хÿтĕлеме сиксе тăнăскерсем, иртнĕ çулталăк хушшинче нимĕçсен фашистла захватчикĕсемпе çапăçса питĕ пысăк çĕнтерÿсем турĕç. 1942—1943-мĕш çулхи хĕллехи кампание тата 1943-мĕш çулхи çуллахи наступление пула, Хĕрлĕ Çар тăшман çарĕсене темиçе çĕр километр Хĕвеланăçнелле хăваласа ячĕ, халĕ вĕсене Днепр шывĕн леш енче пыра-пыра çапать. Темиçе çĕр хулана, темиçе вунă пин яла нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă. Темиçе вунă миллион совет çыннине фашистла чуралăхран хăтарнă.

2. Октябрьти революци çĕнтернине пула, Россия ĕмĕр кая юлса пынине пĕтерсе лартнă, пирĕн çĕршыв хăватлă индустриллĕ тата колхозлă держава, хăйĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хÿтĕлеме пултаракан держава пулса тăчĕ.

3. Хĕрлĕ Çарпа совет халăхĕ хăйсен социализмлă çĕршывне, тĕнчери чи малта тăракан строя—совет стройне хÿтĕлеççĕ. Иртнĕ çулталăк хушшинче тунă аслă çĕнтерÿсем совет стройĕн вăйне, ăна çĕнтерме çуккине, пирĕн халăх Ленинпа Сталин партийĕ тавра пĕтĕçсе тăнине, вăл тылра хăйĕн вăйне шеллемесĕр ĕçлеме, фронтра тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр çапăçма хатĕррине кăтартса пачĕç.

4. Совет çыннисем тунă çитĕнÿсемпе лăпланса ларма пултараймаççĕ. Пирĕн çĕршыва фашистла оккупантсенчен пĕтĕмĕшпех тасатасшăн тата тăшмантан ирĕке кăларнă районсенчи хуçалăха çĕнĕрен ура çине тăратасшăн пыракан кĕрешÿ совет халăхне тата ытларах вăй хурса ĕçлеме, ĕççыннисене тата активлăрах, тата организованнăрах пулма хушать.

ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕ.

Укçапа япаласен 3-мĕш лотерейи

Хĕрлĕ Çар валли танксем, самолетсем тума

КАНАШ, октябрĕн 28-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Районри рабочисемпе служащисем укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейин билечĕсене виçĕ кун хушшинче 650.000 тенкĕлĕх, колхозниксемпе единоличниксем 874.000 тенкĕлĕх çырăннă. Колхозниксемпе единоличниксем лотерея билечĕсен укçине çийĕнчех тÿлесе татнă.

Рабочисемпе служащисем тата колхозниксем лотерея билечĕсене илме пысăк хавасланăхпа çыраннă. «Красное пламя» колхоз ... 301 çын 69.900 тенкĕлĕх çыранн.., укçине те çийĕнчех парса татнă. Ку колхоз председателĕ Васильев юлташ 2.000 тенкĕлĕх, колхозниксем 1000 тенкĕрен кая мар çырăннă. «Виççĕмĕш пятилетка» колхозра та ĕç лайăх пырать. Колхоз председателĕ Лукина, колхозник Елизаров юлташсем 2-шер пин тенкĕлĕх çырăннă. Колхозниксем хушшинче пĕтĕмпе 33.000 тенкĕлĕх сарнă.

Хулари предприятисенче, уйрăмах вагонсем юсакан заводра тата «Красный воин» артельте лотерея билечĕсене сарасси лайăх пырать. Вагонсем юсакан завод коллективĕ 326.000 тенкĕлĕх, «Красный воин» артель коллективĕ 9.200 тенкĕлĕх çырăннă. Вăл артельти работница Волкова юлташ уйăхри ĕçукçи чухлĕ çырăннă.

Лотерея билечĕсене сарасси малалла пырать.

А. САМОЙЛОВА.
Перекет кассин заведующийĕ.

Лотерея билечĕсен укçине çийĕнчех тÿлеççĕ

ШĂХАСАН, октябрĕн 28-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Районри ĕççыннисем лотерея билечĕсене икĕ кун хушшинче 1.660.000 тенкĕлĕх ытла çырăнса, укçине 733.535 тенкĕ тÿленĕ. Район центрĕнчи рабочисемпе служащисем лотерея билечĕсем илме уйăхри ĕçукçин 15 процентĕ чухлĕ çырăннă.

Çĕнĕ Мами ялĕнчи колхозниксем лотерея билечĕсен укçине пĕтĕмпех тÿлесе татнă. «Красный партизан» колхоз председателĕ Васильев юлташ лотерея билечĕсем 1.500 тенкĕлĕх туянчĕ.

Ст. АСЛАН.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Уйăхри плана 25 кун хушшинче тултарнă

КУСЛАВККА, октябрĕн 29-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Комбинат коллективĕ Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса йышăннă обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырать. Октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне уйăхри плана тултарнă. Халĕ комбинат Верховный Главнокомандовани фондне пама продукци кăларать.

Октябрь уйăхĕнче Яворский юлташ начальник пулса ĕçлекен цех малта пырать. Вăл уйăхри плана срокчен 138 процент тултарнă. Ку цехра нормăна тултарман рабочисем пачах та çук. Цех коллективĕ укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейин билечĕсене пысăк хавасланăхпа çыранчĕ.

Комбинатри çамрăксен фронтовой бригадисем пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ. Шолобов юлташ ертсе пыракан бригада плана 320 процент таран тултарать. Унăн бригади комбинатри куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялава тытса тăрать.

Н. ПЕТРУЧЕНКО.

Çар ĕçне вĕренмелли кĕтес

КАНАШ. Яманкассинчи тулли мар вăтам шкулта çар ĕçне вĕренмелли кĕтес организациленĕ. Унта плакатсемпе лозунгсем тата тĕрлĕрен нагляднăй пособисем çакнă. Кунта кашни кунах калаçусем пулса иртеççĕ. Çамрăксем вăрçă ĕçне вĕренеççĕ, макетсем тăрăх вăрçă хатĕрĕсемпе паллашаççĕ. Çак ĕçе военрук (вăлах осоавиахимăн шкулти организацийĕн председателĕ) Л. Шемякин юлташ ертсе пырать. Осоавиахимовецсен йышĕ ÿссех пырать. Çак кунсенче татах 20 çын осоавиахим членне кĕнĕ.

И. МАКСИМОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Октябрь уйăхĕнче Шупашкарта лаша çухалчĕ. Тĕсĕ хурарах çÿрен.
Пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: Чувашская АССР, Октябрьский район, Бокашевский сельсовет, Правлению Перво-Синьяльского колхоза „Правда".

Мунчара ĕçлеме çак ĕçсене пĕлекенсем кирлĕ: кочегарсем, кочегар помощникĕсем, банщиксем, швейцарсем, шофер, грузчик тата охранниксем.
Апат-çимĕç параççĕ. Пурăнма общежити пур.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Ярославская, 25, директору бани.
2—1

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23

НТ 1143 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. 6 53 84 п. л.